ЧĂВАШЛĂХ

# «Йăрă ача» япăх-шим?

**Чăваш Республикин кăçалхи бюджетне вулатăп та – чун савăнать: çирĕме яхăн çĕнĕ ача пахчи тума палăртаççĕ-çке-ха! Шупашкарпа ытти хуласенче, районсенче хăтлă та пысăк, çутă та илемлĕ ача пахчисем уçăлĕç. Вĕсенче пин-пин ача калаçма та вылям, сăвă калама та юрлама, вулама та шутлама вĕренме пуçлĕ. Савăнмалла мар-и вара çакăншăн? Чăннипех те савăнатăп. Анчах кăштах чуна хурлантараканни те пур... Вĕсене каллех «Родничок» та «Колокольчик», «Маленькая страна» та «Солнечный город», «Дошкольная Академия» та «Созвездие», «Кроха» та «Эрудит» ятсем парса пĕтерĕç... Каллех чăвашла ятсем хитрелетмĕç çак илемлĕ те хăтлă çуртсене...**




## Камран килет?

Çапла çирĕплетсе калама юлашки çулсенче уçăлнă ача пахчисене пăхса тухни çителĕклĕ. Акă Вăрмарти çĕнĕ ача пахчине «Родничок» (чăвашла – «Çăлкуç»), Улатăр районĕнчи Чуварлейрине «Колокольчик» (чăвашла – «Шăнкăрав»), Çĕрпӳ хулинчине «Солнечный город» (чăвашла – «Хĕвеллĕ хула»), Çĕнĕ Шупашкартине «Маленькая страна» (чăвашла – «Пĕчĕк çĕршыв») ятсем панă. Пĕр чăвашла ят та çук. Енчен те ачасене мĕн пĕчĕкренех тăван чĕлхен кирлĕлĕхне ăша хывтармасан кайран мĕнле вĕрентейĕн?

Нивушлĕ ача пахчине тăван чĕлхепе ят пани пĕрре те пулман-ши вара юлашки çулсенче! Пулнă иккен, Патăрьел районĕнчи Шăнкăртамра тутарсем хăйсен тăван чĕлхипе хитре те инçетрен курăнмалла çырса хунă – «Сандугач» (чăвашла «шăпчăк» тени пулать).

Чăваш Республикин «Чĕлхесем çинчен» саккунне та пĕлсе усă курнă кунта, учреждени хăмине икĕ патшалăх чĕлхипе çырнă: сулахайра – чăвашла, сылтăмра – вырăсла. Ача пахчин ячĕ вара унта та, кунта та «Сандугач», шăпчăк та мар, соловей та. Тĕрĕссипе çапла пулмалла та.

Тата тепĕр ырă тĕслĕх пур: Шупашкарта пĕр ача пахчине «Йăрă ача» ят панă! Шупашкарта! Пĕр-пĕр ялта мар, тĕп хуламăрта. Курăр-ха, япăх-и? Хитре çырăнать, хитре янăрать. Чăвашла пĕлменни «Непоседа» тесе калатăр эппин, анчах чăвашĕсем тăван чĕлхипех каласан аван-çке.

Вырăс литературинче икĕ авалхи ыйту пур: «Что делать?» тата «Кто виноват?» Эпĕ виççĕмĕшне хушса хуратăп яланах: камран килет? Камран килет çĕнĕрен уçăлакан ача пахчине мĕнле ят парасси? Чиновниксенчен çеç-и? Çав ача пахчине çӳреме пуçлакан шăпăрлансен ашшĕ-амăшĕнчен-и? Пайăррăн камран иккенне калаймăп, анчах пĕри те пĕри çакнашкал сĕнӳ парсан ăна пăхса тухмасăр, асăрхамасăр иртмĕç пулĕ тетĕп.

## «Тамчыкай», «Ак каен», «Сэлэт», «Ляйсен», «Тылсым» тата ыттисем...

Интернетра ятарласа пăхас-ха терĕм: Тутарстанри ача пахчисене тутарла ят панисем пур-ши? Пур çеç мар иккен, мĕн чухлĕ вĕсем! Ялсенче кăна та мар, хуласенче те çителĕклех. Акă, тĕслĕхрен, Хусанти Совет районĕнче «Сэлэт» (Талант) ача пахчи. Тен, ку таçтан пĕр тĕслĕх, ятарласа, çынсене тутар чĕлхи те патшалăх чĕлхи пулнине кăтартмалăх кăна пулĕ? Тутарстанри ача пахчисен ячĕсене малалла тишкертĕм, тутар ячĕсемлисем – вуншар...

Хăш сăмахĕ мĕне пĕлтернине пĕлместĕп, анчах ачасене пĕчĕклех тăван чĕлхене илтсе ӳсме чĕнсе калаканнисем, пулăшаканнисем ĕнтĕ. Паллах, Тутарстанра та пурте тутар ятлисем мар, «Дюймовочка», «Колобок», «Василек», «Крепыш» йышшисем те самай, анчах пĕтĕмĕшле мар-çке пирĕнни пек. Акă темиçе ят илсе паратăп: «Ляйсен», «Тамчыкай», «Энже», «Лалэ», «Ак каен», «Батыр», «Милэшкэй», «Тургай», «Умырзая», «Конбагыш», «Бэлэкэч», «Алсу», «Кук чэчэк», «Нэни куллар», «Энже бортеге», «Лэйсэн», «Алтынчэч», «Шаян нэнилэр», «Тирэк», «Голчэчэк», «Гэлбакча», «Каенкай», «Кубэлэк», «Милэш», «Шатлык», «Экият», «Чишмэ», «Кояшкай», «Йолдызкай», «Чык тамчысы», «Башаккай», «Камыр-Батыр», «Зилейлук», «Кугэрчен», «Кызыл Калфак», «Милэушнэ», «Салават купере», «Сэйлэн», «Танбатыр», «Чулпан», «Эллуки»...

Тутарсенчен вĕренмелли нумай, анчах пуçлăхсем мĕншĕн тĕслĕх илесшĕн мар вĕсенчен?

## Хитре чăваш сăмахĕсем те пур, пуçлăхсем

Пĕрре те иккĕленместĕп, кăçал тата тепĕр çул уçăлакан ача пахчисенчен пĕрне те пулин тăван чĕлхепе ят парĕçех, ку Комсомольски районĕнчи Урмаелĕнчи пулассăн туйăнать. Чăваш Республикинчи çын шучĕпе чи пысăк тутар ялĕсенчен иккĕмĕш шутланакан Урмаел пĕрремĕшĕнчен юлмастех ĕнтĕ...

Чăвашла ят парасси вара иккĕленӳллĕ... Мĕншĕн тесен вĕсем пурте Шупашкарта та Канашра вырнаçнă, чăвашăн вара мĕнле каларăш пур-ха – Канашран иртсен чăваш чĕлхи кирлĕ мар теççĕ-и?

Тен, эпĕ ахалех вăрçăнатăп? Тен, пуçлăхсем чăваш чĕлхинче те хитре сăмахсем – ача пахчин ячĕ пулма тивĕçлисем – пуррине пĕлмеççĕ? Пулма пултарать-çке-ха кун пекки, пултарать. Акă, чăваш чĕлхи кунĕнче Иван Яковлев палăкĕ умĕнче ирттерекен уява пыраççĕ-çке-ха чăвашла пĕлмен пуçлăхсем, вĕсем уççăнах йышăнаççĕ чăвашла пĕлменнине, тен, çавсенчен шăпах килет-ха ача пахчисене мĕнле ят парасси?

Çакнашкал пуçлăхсене пĕлме ятарласа темиçе сăмах илсе паратăп, тен, вĕсенчен пĕрне суйласа илес тейĕç.

Тен, вĕсене чăваш саспаллисем – Ă, Ĕ, Ç, Ӳ – пурри хумхантарать? Çырнă чухне йывăрлăх сиксе тухасси, каланă чухне йăнăш каласа намăс курасси... Тен, çавăнпа шикленеççĕ вĕсем чăвашла ят пама? Апла пулсан, чăваш саспаллийĕсемсĕррисене уйрăммăн палăртам-ха: ***автан, акатуй, асам, асамат, ахах, Илемпи, кушак, маттуркка, мерчен, мулкач, пакша, панулми, пилеш, пукане, путене, Сарпике, селем, сукмак, тевет, телей, хавал, халап, чарлан, чечек, шевле, юман, юмах...***

Чăваш саспаллисем пуррисем те пĕрре те япăх мар, хитре те чăн чăвашла илтĕнĕç: ***Алтăр çăлтăр, арăслан, ăмăрткайăк, вĕлле хурт, вĕршĕн, иçĕм, кăйкăр, кăлтăрмач, кĕлчечек, кăсăя, măкăнь, пăрчăкан, савăнăç, çăлтăр, çăлтăрсар, çĕмĕрт, çырла, тĕкĕлтура, тĕлĕнтермĕш тĕнче, турткăш, утмăлтурат, хурлăхан, чĕкеç, чĕрĕп, шăкăлчи, шăнкăрав, шăнкăрч, шăпчăк, шӳлкеме...***

Тата ытти вун-вун, çĕр-çĕр ят... Пĕр сăмахпа çеç мар, икĕ сăмахран тăракан ят пар – кашнин валли çитет, тăван чĕлхемĕр çав териех чухăн мар-ха пирĕн. Кунта, паллах, чĕлхе чухăнлăхĕ пирки мар, хамăрăн чун чухăнлăхĕ пирки калаçмалла пулĕ.

Эпир çак статья кама та пулсан шутлаттарасса, ăна вуланă хыççăн кам та пулсан тăван ялĕнче, хулинче, хутлăхĕнче ача пахчине, ача пахчи çеç-им тата, лавккине е кану вырăнне, чăвашла ят парасса шанатпăр.

Тепĕр хут таврăнатăп тĕп шухăш патне: ачасене мĕн пĕчĕкрен чăваш сăмахне итлеттерсе ӳстермесен кайран кая юлатпăр, чăпăрккапа хăмсарсан та, пĕремĕкпе илĕртсен те вĕрентеймĕпĕр.

✎ **Владислав ДМИТРИЕВ**










*Танлаштарма: Тутарстанри ача пахчисен ячĕсем тата...*








*...Чăваш Енри ача пахчисен ячĕсем. Уйрăмлăхне куратăр--и?*

ШУХĂШЛАР-ХА, ТĂВАНСЕМ

# Хурлăх е савăнăç кунĕ?

**Пĕтĕм çĕршывĕпех Çĕнтерӳ кунне паллă турăмăр. «Вилĕмсĕр полк», парад, палăксем патне чечексем хуни, ытти вун-вун мероприяти... Çулсерен ӳссех пырать çав мероприятисен шучĕ, шутласа кăлараççĕ те пĕр-пĕр çĕнĕлĕх йăлана кĕртсе яраççĕ. Вара çак хурлăхлă та сăваплă кун темле Акатуя аса илтерекен уяв пекех пулса каять... Каять мар, кайрĕ ĕнтĕ...**

«Вилĕмсĕр полк» акцие шутласа кăлараканăн халь мĕнлерех туйăмсем çураласçĕ-ши? Çулсерен пиншер çын хăйсен аслашшĕ-кукашшĕн сăнӳкерчĕкĕсене йăтса хула-ял урамĕ тăрăх утнипе савăнать-ши е çак сăваплă ĕç маскарада çаврăнса кайнăшăн кулянать-ши? Вăрçă хирĕнче пуç хунă, чĕрĕ таврăннă пулсан та каярах куçне хупнă тăвансене аса илни, чăн та, сăваплă, анчах çапларах аса илмелле-ши вĕсене?

Аслисем çеç утмаççĕ-çке, кашни шкулта, ача пахчи таранах, ирттереççĕ «Вилĕмсĕр полк» акцине. Ватти-вĕтти хутшăнать темелле, вăрçă мĕнне пĕлмен ачапча та... Мĕншĕн? Мĕн кăтартасшăн эпир кунпа? «Никам та манăçман, нимĕн те манăçман» каларăша вăтам классенче, ача кăштах ăнкарма пуçласан, ăша хывтарма пуçласан аванрах пулмалла та...

Шел, чылай япала пирĕн çĕршывра çӳлтен ыйтнипе-хушнипе пулса пырать. Ку пулăм Çĕнтерӳ уявне те витĕм кӳни лайăхах мар тесе шутлатăп. Çак çутă кун «çӳлтисем хĕсĕрленипе» çутă уявран юратманнисен ретне куçма пултарать-çке темиçе çултан, çакна никам та шута хумасть. Мĕншĕн тесен хĕсĕрленипе-хушнипе çак уявăн чунлăхĕ пĕтет. Çĕнтерӳ кунĕ вара ытларах чун, туйăм шайĕнчи уяв, вăл ыттисенчен çавăнпа уйрăлса тăрать те.

Çĕнтерӳ парад-митингне тĕрлĕ политика партийĕсем хăйсен пиарĕ туса хунине ман чун ниепле те йышăнма пултараймасть: политика вăййине вылякансем, мĕн пайлатăр эсир, мĕншĕн вăрçăра вилнĕ миллионшар паттăр ячĕпе витĕнсе хăвăрăн хура ĕçĕрсене тăватăр? Çак сăваплă кун кирек мĕнле парти те хăйсен атрибутикине пĕр тĕттĕм кĕтесе пĕтĕрсе чикмелле те халăхпа пĕрле пулмалла. Ялавăрсемсĕр, элемĕрсемсĕр. Енчен те питĕ ялав йăтса утас килет пулсан, тархасшăн, тытсамăр Çĕнтерӳ ялавне.

Шел, Çĕнтерӳ уявĕн тĕп сăнарĕсем улшăнчĕç юлашки çулсенче... Ĕлĕкхи сăнӳкерчĕксене пăхатăп та, малти ретре ветерансем утаççĕ. Хальхи сăнӳкерчĕксене пăхатăп та... Телевизор яратăп та, малти ретре утакансемех интервью параççĕ... Шел...

Çĕнтерӳ кунĕнчен темле маскарад, шоу туса хучĕç... Теприсем çак куна Хурлăх, Хуйхă кунĕ пек йышăнмалла теççĕ, савăнăçлă мероприятисем ирттерме чарма ыйтаççĕ. Пĕр енчен пăхсан, килĕшме те пулать вĕсемпе: чăн та, миллионшар çын пĕтнĕ çак вăрçăра, миллионшар хĕрарăм упăшкисĕр, миллионшар ача çывăх çыннисемсĕр тăрса юлнă, çак вăрçа пула тата миçе миллион ача çут тĕнчене те килеймен... Тепĕр майлă шутласан, çавах та Савăнăç кунĕ пулĕ ку. Вăрçă пĕтнĕ кун, Хуйхăпа Йывăрлăх чарăннă кун. Паллах, вилнисене нихăçан та манмĕç тăванĕсем, çапах та вăрçă пĕтни малашлăх çутăрах та телейлĕрех пулас шанчăк çуратнă. Паянхи çамрăк ăрушăн, асаттесемпе кукаçисене те аран астăвакансемшĕн, Çĕнтерӳ кунĕ, паллах, урăхларах (50, 40, 30 çул каярахрипе танлаштарсан) уяв, унăн пĕлтерĕшне туллин уçса парасси вара аслисенчен нумай килет. Енчен те малашне те çапларах шоу шайĕнче йĕркелетпĕр пулсан çак уява, вăл Рио маскарадне куçса каяс хăрушлăх сиксе тухма пултарать.

Вăрçă ветеранĕсен шучĕ çулсерен чакса пырать, шутлăн юлчĕç вĕсем. Анчах та паттăрсене астăвакансем пур-ха, вĕсем çинчен, вăрçăри харсăрлăхĕ пирки каласа пама пултаракансем пур. Вĕсен ачисем (хăйсем те самай ватăлнăскерсем). Ман шутпа, Çĕнтерӳ кунĕнче шăпах вĕсен хăйсен ачисене, мăнукĕсене пĕр кĕрекене пуçтармалла та вăрçăра вилнисене шăппăн аса илмелле, унтан кĕçĕннисене йăлтах-йăлтах каласа памалла. Ăнланмалла, чуна витермелле каласа памалла. Лешсем кайран хăйсен ачисене каласа пама пултарччăр. Çапла пулмалла та ун – Çĕнтерӳ кунĕн. Вара, тен, хăйсен «Мерседесĕсемпе» «БМВисем» çине «Можем повторить!» тесе çырнисене çыпăçтаракансем те сахалланĕç...

✎ **Владислав НИКОЛАЕВ**